## СОКРАТ

Авалхи Афина хулинче
Пуранна пĕр ăслă, ватă грек.
Унăн чапĕ сарăлнă инçе,—
Тӳрĕ çын вăл пулнă ĕмĕрех.

Пур киревсĕр, ирсĕр ĕççене
Хытă вăл питленĕ чĕлхипе;
Чăнлăха вĕрентнĕ тĕнчене,
Килĕшмен чуралăх йĕркипе.

Ак хайхи усал тӳре-шара
Суд умне тăратнă çав çынна,
Вĕлерме суд тунă та — вара
Тĕрмене хуптарнă вăл ăна.

Сăнчăрланă çын ларать пĕччен,
Унăн ячĕ пулнă-мĕн Сократ.
Вĕлерессине кĕтсен-кĕтсен,
Юрăçа вăл ак йыхăрттарать.

Чаплă юрăç пычĕ те калать:
— Тайма пуçăм аслă Сократа!
Мĕнпе тивĕç пултăм-ши капла
Эп тăмашкăн санăн умăнта?

„Ырӑ ҫыннӑм,—тет ӑна Сократ,—
Музыка мӗнне чухласчӗ ман.
Пулӑшсамччӗ, каласа кӑтарт:
Май пур чух пӗлсе юлни аван“.

— Анчах эс... вилетӗн-ҫке часах!—
Терӗ ӑна юрӑҫ, хӗрхенсе.
„Вӑл ҫапла та,—тет Сократ,— ҫапах
Мӗн-ши вӑл гармони? Пӗлтерсем...“

Чаплӑ юрӑҫ музыка ҫинчен
Йӗркипе кала-кала парсан,
Сократ чунӗ — тӗттӗм тӗрмерен
Тухнӑнах — ҫӗкленнӗ ҫуталса.

1936, Афина.